"Радиохум – хаçат страницинче: ача шăпи – ашшĕ-амăшĕн аллинче"

Ача çемьерех пăсăлмасть-ши?

Çак кунсенче район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хŭтĕлессипе ĕçлекен комисси хăйĕн черетлĕ ларăвне ирттерчĕ. Чи малтанах унта 11 ял тăрăхĕнчи çул çитмен çамрăксемпе вĕсене воспитани парас ĕçре хăйсен тивĕçĕсене пурнăçламан ашшĕ-амăшĕсен тĕлĕшпе пуçарнă административлă ĕçсене пăхса тухрĕç.

Кун йĕркинче çавăн пекех ачасемпе çыхăннă тĕрлĕ ыйтусене тишкерчĕç. Районти çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделенинче учетра тăракан шкул ачисемпе çул çитмен çамрăксем çуллахи вăхăта еплерех ирттереççĕ? Халăх ĕçпе тивĕçтерекен районти центр çитĕнекен ăрава ĕçри воспитани парассинчен айккинче тăмасть-и? Комисси ларăвĕнче çак ыйтусен хуравне тупнипе пĕрлех ял тăрăхĕсемпе унта вырнаçнă вĕрентŭ учрежденийĕсем çемьесемпе мĕнле ĕçленине тишкересси те ырă йăлана кĕнĕ. Хальхинче Чуманкасси ял тăрăхĕпе кунти шкул ку енĕпе епле ĕçленине хак пачĕç. Юлашки ыйтупа районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделенийĕн кăçалхи çур çулхи ĕçне пăхса тухрĕç. Ларăва асăннă комисси председателĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн ертŭçи А. Е. Андреева ертсе пычĕ. Комисси членĕсем çак кун кăнтăрла иртсен, Мăн Сĕнтĕр, Ильинка тата Москакасси ял тăрăхĕсенчи хăш-пĕр çемьесенче пулчĕç. Вĕсенчи лару-тăрупа паллашрĕç.

Сăмаха вара юлашки ыйтуран пуçлам-ха. Кăçалхи çур çулта районти çул çитмен 26 çамрăк хутшăннипе 23 преступлени тунă. Урăхла каласан, 18 çул тултарайман çамрăксем тунă преступленисен йышĕ пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 76,9 процент чухлĕ ŭçнĕ. Чи нумай преступлени Йŭçкасси (5), Мăн Сĕнтĕр (4) ял тăрăхĕсенче пулнă. Çавăн пекех Муркаш, Çатракасси, Чуманкасси ял тăрăхĕсенче 3-шер, Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче 2, Москакасси, Шетмĕпуç, Оринин, Турай ял тăрăхĕсенче пĕрер преступлени тунă çул çитмен çамрăксем. Кашни тĕслĕхĕнче пĕрер çамрăклах авăннă шăпа. Çемье, общество воспитани ĕçĕнче хăй тивĕçне туса çитерейменни пирки калать кашни тĕслĕх.

Районти шалти ĕçсен пайĕ преступленисем ан пулччăр тесе шкулсенче час-часах калаçусем ирттересси йăлана кĕнĕ. Çамрăксем йышлă пуçтарăнакан вырăнсенче те час-часах рейдсем, тĕрлĕрен операцисем ирттереççĕ.

Çуллахи вăхăтра уйрăмах нумайланать пушă вăхăт ачасен. Çавăнпа та вĕсем вăхăта усăллă ирттерччĕр тесе районти вĕрентŭ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕ хăйĕнчен килнине йăлтах тăвать. 21 шкулта ĕçпе кану (625 вĕренекен çŭрет), 26 шкулта (700 ача) шкулсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли, 13 (225 ача) шкулта профиллĕ лагерьсем ĕçлеççĕ. "Муркашри социаллă обслуживани центрĕ" урлă тепĕр 3 шкулта 210 ача каннă. Асăннă лагерьсене чи малтанах йывăр лару-тăруллă çемьесенчи ачасене явăçтараççĕ. Ачасем вăхăта усăллă ирттернипе пĕрлех вăхăтра вĕри апат çиеççĕ.

Пушă вăхăт çук ачан йытă хăвалас шухăш та çук. Тĕрĕс мар çул çине те тăмасть. Çул çитмен çамрăксене ĕçре пиçĕхтерессинче .районти ĕçпе районти тивĕçтерекен центр та айккинче юлмасть. "14 çултан пуçласа 18 çула çитичченхи çул çитмен граждансене ĕçпе тивĕçтересси" программăпа килĕшŭллĕн 298 çул çитмен çамрăка çуллахи вăхăтра ĕçе вырнаçтарнă. Çак тĕллевпе пĕтĕмпе 195 пин тенкĕ уйăрнă пулсан, 95 пин те 700 тенкипе усă курнă ĕнтĕ. Япăх-и вара ача каникул вăхăтĕнче уйăхра 500 тенкĕ ытларах ĕçлесе илни? Пачах урăхла: ашшĕ-амăшне ытларах хаклама пуçлать. Укçа ахаль килменнине ăнланать. Уйрăмах ку тĕлĕшпе ĕçпе тивĕçтерекен центрпа Москакасси, Чуманкасси, Оринин, Калайкасси, Сосновка, Йŭçкасси шкулĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Анчах та ача шкул хыççăн, ĕç хыççăн киле таврăнать, çемьерех çĕнĕ куна кĕтсе илет. Мĕнле кăмăлпа? Çитет-и унта ача валли кил ăшши? Шел пулин те, тепĕр чух ашшĕ-амăшĕсем çакăн пирки шутлама манатпăрши? Çуралнă ача хăех чăнчăн çын пулса ŭсет тетпĕрши? Ĕçсе лартнă ашшĕ килте ахăрсамана кăларать. Е уйрăлнă ашшĕпе амăшĕ ачасене "пайлать". Е тата ачисене пăрахса хăварса, "айккинче" телей шыракан амăшĕсем, ашшĕсем те çук мар. Çак хушăра ача чунĕ мĕнле ыратни пирки шутлама та вăхăт çук. Пирĕн хамăрăн проблема-çке-ха. Çакă ачана нихăш енчен те пырса тивмен пекех тытатпăр хамăра. Пĕр-пĕринпе ăмăртмалла ĕçекен ашшĕ-амăшĕсен ачисен тата камран çăкăр ыйтмалла, камран чун ăшши илмелле? Кĕскен каласан, ашшĕ-амăшĕсем хăйсен тивĕçĕсене пурнăçламаççĕ. РФ Право йĕркине административлă майпа пăсни çинчен калакан Кодексĕн 5.35 статйипе килĕшŭллĕн çакăншăн чи пĕчĕк ĕç укçин пĕр виçинчен пуçласа пилĕк виçи таран штраф тŭлеттереççĕ.

Çемьерен пуçланать йăлтах. Телей те, ăнăçăр шăпа та. Районти шалти ĕçсен пайĕн кăтартăвĕсем те ача çемьерех пăсăлни пирки калаççĕ. Çŭлерех асăннă преступленисенчен 8-шне ăнăçсăр çемьесенчи ачасем тунă: 5-шне – сахал тупăшлă çемьесенчисем. Чи нумай преступленине – 12-шне вара тулли йĕркеллĕ, укçатенкĕ çителĕклĕ çемьесенчи ачасем тунă. Комисси ларăвĕнче те ун йышши тĕслĕхсем пулчĕç. Килте йĕркеллĕ тытакан, шкулта йĕркеллĕ вĕренекен ачасемех урамра хăйсене урăхларах тытаççĕ. Шутламасăр тунă утăмпа пĕтĕм пурнăçне хуçса хураççĕ. Пĕлместпĕр иккен-ха пĕтĕмпех хамăр ачасем çинчен.

Ача вăл ачах. Тимлĕх ыйтать, ашшĕ-амăшĕн юратăвĕ кирлĕ. Ĕçет е ĕçмест – уншăн ашшĕ-амăшĕ пуриннинчен те чи лайăхраххи шутланать. Кирлĕ чухне вĕсенчен хŭтлĕх те, пулăшу та кĕтет. Çитĕннисем çакна ăнланманнинче, ачисемшĕн яваплăх туйманнинче мар-ши пĕтĕм инкек сăлтавĕ? Кăçалхи çур çулта районта пĕтĕмпе 114 çынна право йĕркине пăснăшăн административлă майпа явап тыттарнă пулсан, 104-шĕ – çул çитмен çамрăксем. Ачасем килте мар чух лăпкă сывăрма паман кăтарту ку. Пурнăçри пĕтĕм проблемăсенчен хамăр ывăл-хĕрсен хуйхи-савăнăçне чи мала хумалли пирки, хамăр ачасемшĕн вăхăта та, кăмăла та хĕрхенме юраманни çинчен калакан цифрăсем.

Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕсем районти çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хŭтĕлессипе ĕçлекен комисси ларăвне килменни те вĕсем хăйсен ачисен шăпишĕн пăшăрханманни çинчен каламасть-и? Алла черкке тытиччен çитĕнекен ывăл хĕрсене хăйсемшĕн намăс пуласса тата ма шутламаççĕ-ши хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕсем? Уйкас Янасал тăрăхĕнче те пур кун пек çемье. Унта кăна-и? Кашни ялтах пулĕ. Хорнуй ял тăрăхĕнчи А. А. Ивановăн та çумĕнчи ачи пирки шутламаллах ĕнтĕ. Килте ĕçкĕпе иртĕхнĕ хушăра ачин мĕн çисе пурăнас? Ярославка ял тăрăхĕнчи И. З. Дмитриеван тата амăш чунĕ ăçта пулнăши хăй ачине хăех тĕрĕс çултан тĕкнĕ чух? Турай ял тăрăхĕнчи В. М. Бойкинан тата ăçтан-ха комисси ларăвне килме вăхăт пултăр? Ачисене пăрахса хăварсах "телей" шырать пулсан тĕнче тăрăх.

Çакнашкал çемьесем пĕрре кăна та мар пулĕ ялсенче. Ĕçлеççĕ-ха ял тăрăхĕсем çемьесемпе, ĕçлемеççĕ мар. Çакă Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Л. Г. Ковалевапа кунти шкул директорĕ В. М. Васильев каласа панинчен те курăнчĕ. Çŭлерех асăннă цифрăсемпе фактсем вара çак ĕçе татах та вăйлатма ыйтаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсене çак чăнлăха ăнланма хистеççĕ: пирĕн çемьери телей хамăртанах килет. Ачасене çуратрăмăр пулсан, кашнинех парасчĕ хамăр юратăва. Пĕрремĕш ача-и вăл е çиччĕмĕш? Вара ача чунĕнче тŭрккеслĕх валли вырăн пулмĕ. Ачасемшĕн, вĕсен телейĕшĕн пурăнасчĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Ĕçлĕ тĕл пулусем

К.И. КОСАЧЕВ:"Çăкăр йŭнелĕ, сысна ашĕ хакланĕ, ытти проблемăсем те татăлĕç"

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

–Ял хуçалăхĕнчи çакăн пек пек лару-тăрупа çынсене эпир ĕçпе те, тивĕçлĕ ĕç укçипе те тивĕçтерейместпĕр. Арçынсем, вĕсем кăна мар, вĕсен мăшăрĕсем те Мускава ĕçлеме çŭреççĕ. Вырăнта ĕçлекенсем çуккипе пĕрлех çак пулăм çитĕнекен ăрава воспитани парас ĕçре те проблемăсем çуратать, – чăтса тăраймарĕ Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. И. Никитин.

–Кĕçех пуш кĕленчесемпе пластик савăтсен "айне "пулатпăр". Экологи проблемине пуçне çĕклеттерет çак татса паман ыйту, – чун ыратăвне пытараймарĕç каллех тĕл пулăва хутшăнакансем.

–Мĕншĕн çăкăр хакĕ хăпарчĕ?

–Халĕ, акă, строительство материалĕсен хакĕсем çŭлелле "сикеççĕ". "Сочи ыйтăвĕ" тепĕр енчен çапла çапать, теççĕ. сутуçăсем.. – нумай кĕттермесĕр пулчĕ тепĕр ыйту.

–Ку ниепле те Сочинче иртекен олимпиадăна хатĕрленессипе çыхăнмасть. Уйрăм коммерсантсем çапла майпа хăйсен таварне хаклăрах хакпа ярăнтарма тăрăшни çеç. Эсир хускатнă ыйтусене пĕтĕмпех контроллеме шантаратăп. Вĕсем пĕр çынна, пĕр района кăна пырса тивмеççĕ. Ку ыйтусем ялсен, районсен, республикăн проблемисем, çавăнпа та вĕсене Федераци шайĕнче системăлла татса памалла.

Малалла Костантин Иосифович хускатнă ыйтусем çинче уйрăммăн чарăнчĕ. Сысна ашĕн хакĕ чакса кайнине илер. Шутламан-туман çĕртен сиксе тухнă проблема ку. "АПК аталантарасси" наци проектне халăха пулăшас тĕллевпе пурнăçа кĕртме пуçларăмăр. "Сысна ашĕн" проблеми ăçтан сиксе тухнине тупса палăртăпăр. Çак проблемăна тăвансене чаратпăр, çулĕсене пŭлетпĕр, тесе шутлатăп. – пулчĕ хурав.

Хаксен шайлашăвĕ çукки пирки. Кунта та йĕрке пулмалла. Халĕ ял хуçалăхне аталанма пулăшакан паттшалăх программине хатĕрлеççĕ. Пилĕк çуллăха пулать вăл. 2008 –2012 çулсем валли. Унта шăпах çак хаксен шайлашăвне йĕркелес, дотаци ыйтăвĕсене пысăк тимлĕх уйăрнă. Çакна валли 551 миллиард тенкĕ уйăрма палăртнă.

Константин Иосифович çавăн пекех çĕршывра çŭлерех асăннă тапхăрта тепĕр 5 çуллăх программа пуласси пирки каларĕ. Кивĕçĕрĕшнĕ тата авариллĕ çурт-йĕр программи пулĕ вăл. Кун валли уйăракан сумма – 250 миллиард тенкĕ.

– 2012 çул вĕçне çĕршывра çĕрĕшнĕ çурт-йĕр пулмĕ, авариллĕ лару-тăрурисене йăлтах тĕплĕн юсамалла, – палăртрĕ вăл.

Унтан сăмах çăкăр хакĕ çине куçрĕ.

Çăкăр хакĕ ŭсме нимĕнле сăлтав та çук. Çавăнпа та ку ыйтăва контроллеме пуçлăп. Тепĕр икĕ уйăхран çăкăр хакĕ малтанхи шая анасса шантаратăп. Спекулянтсене иртĕхме памалла мар, – пулчĕ Константин Иосифовичăн хуравĕ.

Пуш кĕленчесемпе пластик савăтсем пирки, акă, мĕн татса каларĕ.

–Ку тĕлĕшпе халĕ вăйра тăракан законодательствăна улшăнусем кĕртмеллех. Вĕсене каялла заводсене çĕнĕрен усă курмалла тума тавăрса парассине йĕркелемелле. Ку ыйтăва та куçран вĕçертмĕп.

Сосновкăран хăнасем Москакассинче вырнаçнă "Сеспель" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра пулчĕç. Кунта тĕнчипех туянакан цистернăсем кăларнине курса тĕлĕнчĕ

– Çĕнĕ ангара хута ярсан, кунне вуншар туса кăларма пуçлатпăр вĕсене. Туянакансем пур ,– ăнлантарать асăннă предприятин коммерци енĕпе ĕçлекен çумĕ А. М. Иванов.

Мăн Сĕнтĕр райповĕн Москакассинчи самообслуживани йĕркипе ĕçлекен магазинĕнче, юнашарти строительство таварĕсем сутакан магазинта, çавăн пекех пулас барта пулса курчĕç хăнасем. Мăн Сĕнтĕрти çăкăр заводĕнче курнипе те кăмăллă юлчĕç. Муркаш районĕнче ĕçчен халăх пурăннине курса ĕненчĕç.

–Маншăн сирĕн патра пулни питĕ усăллă пулчĕ. Ял пурнăçĕпе, унти проблемăсемпе паллашрăм. Вĕсене татса парассипе ĕçлĕпĕр, – терĕ вăл.

Л. ТУКТИНА.

Сăн ŭкерчĕксенче: Мăн Сĕнтĕрти çăкăр заводĕнче, магазинра.

Автор сăн ŭкерчĕкĕсем.

Çĕнĕлĕх

Сывлăх шкулĕ уçăлчĕ

Мăн Сĕнтĕрте утă уйăхĕн 11-мĕшĕнче Сывлăх шкулĕ уçăлчĕ. Унăн занятийĕсем малашне ялти тĕслĕх библиотекăра иртĕç. Сывлăх шкулне хăйсен сывлăхĕ пирки шутлакансене пурне те чĕнеççĕ тата кĕртеççĕ. Унта пырас текенсем библиотека заведующийĕ С. Соколова патĕнче çырăнма пултараççĕ. Сывлăх шкулĕнчи занятисене Шупашкарти "Селеновый дар" центртан килекен врачсем ирттереççĕ. Вĕсем сире тĕрлĕ чир-чĕртен хŭтĕленмелли микроэлементсем пирки тата вĕсене хăш ŭсентăрантан "илмеллине" каласа парĕç. Интересленекенсен ыйтусемпе Мăн Сĕнтĕрти тĕслĕх библиотекăна (Ленин урамĕ, 16-мĕш çурт. Тел: 52-3-65) тата Мăн Сĕнтĕр больницин неврологĕ Светлана Николаевна Скворцова е кунти терапевт Александра Николаевна Кондратьева патне пымалла. Çитес заняти утă уйăхĕн 28-мĕшĕнче 11 сехетре пулать.

О. ТИМОФЕЕВА, курăксемпе ĕçлекен врач.

Вулакан пултарулăхĕ

Кайăкпа кушак

Эпĕ тухрăм урама –
Курах кайрăм кушака.
«Мĕн тăвать-ши ку»,- тесе
Пăхса ларап тĕлĕнсе.

Ак вăл курчĕ кайăка,
Шуса пычĕ çывăха.
Анчах уçăлчĕ хапха,
Кĕчĕ-тăчĕ ман кукка.

Елена БЛИНОВА.